П. Н. НИКОЛАЕВ

# БУКВАРЬ





А Ӑ Б В
Ӗ Ж З И
Н О П Р
Ӳ Ф Х Ц
Ъ Ы Ь


Г Д Е Ё
Й К Л М
С Т У
Ч Ш Щ
Э Ю Я

ЛИСТОК СРОКА ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Количество пред. выдач

Чс (Чув)
Н 63

П. Н. НИКОЛАЕВ

# БУКВАРЬ

Тӳрлетнӗ 2-мӗш издани



ЧӐВАШ АССР
КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1963

ПРОВЕРЕНО
20 07

Б 415690

ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА
им. Горького

Николаев Петр Николаевич

БУКВАРЬ ЧУВАШСКИЙ

Редактор **Н. Т. Васянка.** Техн. редактор **В. И. Павлова.**
Худож. редактор **В. Ф. Солодовников.** Корректор **Д. В. Сивкина.**

Сдано в набор 3-I-1963 г. Подписано к печати 11-III-1963 г.
Формат 70×108 1/16. Объем 8,22 п. л.+вкл. 0,33 п. л. Уч.-изд. л. 8,75+вкл. 0,33. Тираж 27000 экз. Заказ № 2551. Изд. № 158. Цена 20 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.





























































































415690

# А а





а-а-а!









ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА
им. Горького

# У у





у-у-у!









а-у!



у-а!

а а а у у у а а у у

а-у ау ау у-а уа

# Нн



ан!







ан
ну

ну
ан

ну!





на!

| | | |
|---|---|---|
| ау | ан | а-на |
| уа | на | у-на |

Ау, Анна!

Анна, ау!



Ан-на

| | | |
|---|---|---|
| **а** | **у** | **н** |

*ан ан ан ан ан ан ан*

*на на на на на на на*

# Л л







а-ла

| | | |
|---|---|---|
| а-ла | у-ла | Ан-на |
| а-на | а-лу | ал-ла |

**а | у | н | л**





| | |
|---|---|
| ала | .ла |
| алу | а.а |
| ула | ул. |



Анна, алла!

ула ▭

**ла | лу | на | ну | ау | уа | ал**



## Мм



ам! ам!





| | | |
|---|---|---|
| ам | ма-на | ман |
| ма | ма-ла | лум |

Ман. Мана. Мала.





му, му!



| | | |
|---|---|---|
| ан | му | ма-на |
| ау | ам | ул-ма |
| уа | ма | Ан-на |

ул-ма

Анна, ан ман!

Мана улма.

**Аа | Уу | Нн | Лл | Мм**



# Ăă





у-лăм

| | | |
|---|---|---|
| ă-на | ан-лă | ă-ман |
| а-лă | ма-ла | у-лăм |
| а-ла | ал-ла | у-нăн |



ăн-лан

ма-нăн

ă-ман ал-лăн

Анна, ăнлан!

ă ă ă ă ă ă ă ă ă ă ă

а-лă алă алă алă





А-лă

| | |
|---|---|
| А-на | У-лăм |
| А-лă | Ăн-лан |
| Ă-ман | Ма-нăн |

Ăман. Улăм. Манăн алă. Манăн улма. Алла-аллăн. Ăна ăнлан.

Ă Ă Ă Ă Ă Ă Ă

Ă-ман. Ăман. Ăман.

# Р р





рак

у-рам

| | | |
|---|---|---|
| у-ра | ра-мă | у-рам |
| а-ра | нă-рă | а-ран |



**Раман.**

Раман урамра.
Ау, Раман!





| | | |
|---|---|---|
| у-рам | ар-ман | у.а |
| ур-лă | Ра-ман | нă.ă |
| нă-рă | лар-ман | у.ам |

**Арман.**



Раман, лар!

На арман!

Арман умра.



# Хх



ух!



хур

| | | |
|---|---|---|
| ах | ху-ла | хум |
| ух | ху-лă | хул |
| ха | ху-ра | хам |
| ху | хă-ма | хал |



ху-ран

Анна хула-ра.

Урам-ра халăх.

*э э э э э с с с с с х х х*

*ха-лăх, халăх, халăх.*

## **Ан хăра!**

Раман урамра.
Ула хур урамра.
Раман, на хулă!
Ан хăра, Раман!
Раман хăраман.





ху-рăн

ху — ра
ху — ла
ху — лă

**а | у | н | л | м | ă | р | х**



# Ы ы





ых-ра

х . р

ы — рă
ы — ран

хыр

| | |
|---|---|
| ы-рă | хыр |
| ы-ран | хы-рăм |
| ыр-лăх | ых-ра |

Хыр хăма хулăн.

Анна, ыхруна хур!

. ран

ь ь ь ь ь ı ı ı ı ı ы ы ы ы ы

ых-ра ыхра ыхра ы



# Ш ш



| | | |
|---|---|---|
| аш | шу-хă | шу-хăш |
| ăш | ху-шă | шă-рăх |
| уш | шу-рă | хă-măш |
| ша | шă-на | мă-шăр |

Шурă лаша. Хура лаша.

Шурă лаша шухă.



**а | у | н | л | м | ă | р | х | ы | ш**

*ш ш ш ш ш ш ш ш ш ш ш*

*ла-ша лаша лаша*

# В в



вăр-ман



| | | |
|---|---|---|
| вар | а-ван | вы-рăн |
| вăл | а-вал | вă-рăм |
| авă | ы-вăл | ху-нав |



Авă вăрман. Вăл хунав вăрман.

Раман,  ан варала!

*в в в в в в в в в в в в в в в в в в в в*

*вăр-ман вăрман.*



| | |
|---|---|
| лав | ху-нав |
| шыв | шыв-ра |
| вăл | хă-вăл |
| шав | шав-лă |



лав

## Шыв.

Шыв ăшă. Шура шывра. Шыв хумханнă. Анна ларнă. Вăл ывăннă.



# С с



су-ха-ра



са-ва

| | | |
|---|---|---|
| у-сă | су-ха | сă-мах |
| сă-вă | са-сă | са-хăр |

## Лавруш.

Лавруш сăвă вуланă.

Сăвва вăл аван вуланă. Лавруш савăннă.



*с с с с с с с с с с с с с с с с с*

*са-сă сасă касă сасă с*



## Сулӑ.

Шывра сулӑ. Сулӑ вӑрӑм. Сулӑра хыр, хурӑн, ӑвӑс. Хурӑн шурӑ. Хыр сарӑ. Вӑл сухӑрлӑ.

Сулла Михала хураллана.



Х.р Ӑвӑ. Ху.ӑн

С С С С С С С С С С С

Су-лӑ. Сулӑ. Сулӑ.

# Ии



**Ира.**

| | | |
|---|---|---|
| ир | мир | ир-хи |
| И-ра | хир | шă-ши |
| И-ван | вир | Ни-на |



Нина шăлнă. Вăл аван шăлнă. Ира ăна ырланă.

а | у | н | л | м | ă | р | х | ы | ш | в | с | и

*и и и и и и и и и и и и*

*мир мир мир мир мир*

# Ҫҫ



Маруҫ.

| | | |
|---|---|---|
| ҫа-ва | ҫар | ҫыр-ма |
| са-ва | сар | сыр-ма |
| ҫу-ха | ҫăл | ҫыр-ла |
| су-ха | ҫул | ҫăм-ха |



ҫур-ла

## **Маруҫ.**

Маруҫ ҫăм алсиш ҫыхнă. Алсиш шурă. Алла ăшă. Маруҫăн шăрҫа. Унăн шăрҫи сарă.





## Çулла.

Çулла ăшă. Çумăр çунă. Çырмара шыв. Сывлăш уçă. Сывлама çăмăл.

Маруç, Шура, Михала сухан ани çумланă. Çумăр хыççăн çум çумлама çăмăл.

Авă Раман, Ваççа. Раман—лаша. Ваççа ăна хăваланă.



# П п



пă-ру



| | | | |
|---|---|---|---|
| сап | пу-ра | пуç | хы-пар |
| хуп | пă-ра | пыл | па-лан |
| çип | пу-лă | пăр | ха-лап |
| сып | ша-па | пир | пă-рăç |
| шăп | пă-ши | пур | пă-шал |

пăр-ça

## Пулăшу.

Анна аппа пăру пăхнă. Вăл шыв панă. Павăлпа Нина Анна аппана пулăшнă.

*п п п п п п п п п п п*

*пă-ру пăру пăру*



## **Пан улми.**

Ирина аппа урамра ларнă. Унăн пан улми пулнă. Урам урлă Павăл пынă. Ирина аппа Павăла пан улми панă. Вăл Ирина аппана ырă суннă.

  

.улă п.ра пан улм.

*Пан ул-ми. Пан улми*

# Ч ч



| | | |
|---|---|---|
| ач-а | чул | чă-рăш |
| ар-ча | чир | чă-ваш |
| ха-чă | чăм | ву-чах |
| пă-чă | чыс | чă-мăр |



чă-хă

## Аслă çул.

Аслă çула чул сарнă. Вăл çулпа машинă пынă. Çул урлă ача чупма шухăшланă. Анчах вăл машинăна асăрханă. Ача машинăран пăраннă.



# Е е





ещёк

| | |
|---|---|
| чи-е | Ве-ра |
| çи-ес | хи-сеп |
| хă-ех | Е-ле-на |

## Хурсем.

Вера аппа улăхра хурсем пăхнă. Хурсем шурă, самăр. Улăхран инçех мар шыв. Вера аппан аллинче хулă пулнă. Хулăпа вăл хурсене шыв енне хăваланă. Хурсем часах шывра ишме пуçланă.

е е е е е е е е е е е е е е е е е е

чи-е чие чие чие чие



| | |
|---|---|
| ум-не | пе-нал |
| пи-ре | пи-леш |
| ан-не | çе-рем |



пе-нал

**Асанне.**

Асанне Марине валли алсиш çыхнă. Çыхмалли çиппи шурă, çинçе пулнă.

Марине асанне çумне ларнă. Вăл асанне алсиш çыхнине пăхнă. Асанне алсишне аван çыхнă. Марине савăннă.



# Т т





ту-рат

| | | |
|---|---|---|
| ут | ту-ра | хурт |
| хут | ту-рат | турт |
| шут | ту-тăр | тур-та |

## Тарас мучи.

Тарас мучи хуралçă. Вăл тавар сыхлать. Унăн пăшал пулнă. Тарас мучи ăшă тумланнă. Вăл шăнман.



## Унтри.

Унтри арман тунă. Ăна хапха çине лартнă. Арман çилпе авăрнă.





## Çырла пуçтарни.

Унтрипе Наçтуç вăрманта çырла пуçтарнă. Çырли тутлă пулнă.

## Ирхине.



Тул çутăлнă. Тăма вăхăт. Тама́ра тăнă.

— Тама́ра, пит çу! Шăл тасат! — Тама́ра шăл тасатнă. Пит çунă. Унтан вăл тумланнă. Тама́ра таса.

**та | ту | ты | ти | те**



# Ээ





э-мел

| | | | |
|---|---|---|---|
| э-пир | э-мел | эр-не | Эн-тип |
| э-сир | э-тем | эр-тел | эп-пин |

## Эмел.

Энтип сыв мар выртнӑ. Ӑна шатра тухнӑ. Энтипе пӑхма тухтӑр пынӑ.

Тухтӑр Энтипе урама тухма хушман. Ӑна эмел панӑ. Эмел сывалма пулӑшнӑ. Энтип сывалнӑ.





# Йй

| | | | |
|---|---|---|---|
| вăй | йă-нăш | йăм-ра |  |
| май | йы-вăр | хăй-ма | |
| мăй | мă-йăр | хăй-ра | |
| хăй | х ă-йăр | йыш-лă | йă-ва |

## Вăрманта.

Эпир вăрманта пултăмăр. Унта йывăç нумай. Унта эпир мăйăр чылай татрăмăр. Йăтма та йывăр.

Иван пичче сунара пынă. Вăл ăсан тытасшăн. Унăн йытă пур. Вăл йăваш.



# Кк



ку-шак



ку-рак

| | | |
|---|---|---|
| ак | ку | та-ка |
| сак | кун | та-кан |
| рак | кас | ка-шăк |
| ку-рак | кас-ка | тук-мак |

**Кушак.**

Куçма куккан хăмăр кушак пур. Вăл çемçе çăмлă, кăвак куçлă. Унăн çамки шурă. Ăна Ваçкă тесе йыхăрмалла. Ваçкă шăши тытса çиет. Куçма кукка пурăннă кил-çурт таса.

*кушак, курак, шкул*



## Ачасемпе мулкач.

Ачасем вӑрмана кайнӑ. Вӑрманта кӑмпа нумай пулнӑ. Ачасем кӑмпа пуҫтарнӑ. Ачасенчен инҫех мар мулкач пулнӑ. Вӑл ачасенчен хӑранӑ та тарма пуҫланӑ. Ачасем те мулкачран хӑранӑ.



## Сунара кайни.

Микула пичче сунара кайнӑ. Унпа Улай пынӑ. Микула пичче кайӑк кӑвакал тытнӑ. Ӑна Улай пулӑшнӑ.

*К К К*

*Кайӑк. Кайӑк. Кайӑк.*

# Ĕĕ



| | | | |
|---|---|---|---|
| ĕ-не | сĕ-лĕ | се-нĕк | пĕ-чĕк |
| сĕт | çĕ-çĕ | хĕ-вел | сĕ-тел |
| хĕл | кĕ-тӳ | лĕ-пĕш | ти-мĕр |

**Сĕтлĕ ĕнесем.**

Улăхра ĕнесем. Вĕсем курăк çисе тăраннă. Хăшĕсем выртаççĕ. Теприсем шыв ĕçеççĕ.

Верук аппа ула ĕне сунă. Кĕтерин аппа хура ĕнене сăвасшăн.

Ĕнесем шултра, самăр. Вĕсем сĕт нумай параççĕ.

*ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ ĕ*

*сĕт сĕт сĕт сĕт сĕт*



## Кĕркунне.

Çу иртрĕ. Кĕркунне çывхарчĕ. Çанталăк сивĕте пуçларĕ. Çулçăсем саралчĕç. Хирте тыр-пула пуçтарса пĕтерчĕç.

Кураксем ушкăнăн-ушкăнăн йывăçсем çине пухăнса лараççĕ. Крак! крак! тенĕ сасă инçете илтĕнет. Кураксем ăшă енне вĕçсе кайма хатĕрленеççĕ.

Шкул ачисем вĕренме çӳреççĕ.

### Ку мĕн?









# Оо



у-рок

| | | |
|---|---|---|
| ох | пе-ро | со-вет |
| хор | ки-но | от-вет |
| у-рок | Во́-ва | кро-лик |

## **Урокра.**

Урок пуҫланчӗ. Ачасем класра ларӑҫҫӗ. Пӗрремӗш урокра вӗсем вуларӗҫ. Иккӗмӗш урокра шутларӗҫ. Унтан пысӑк перемена пулчӗ. Виҫҫӗмӗш урокра ачасем ҫырма тытӑнчӗҫ. Пурте лайӑх ҫыраҫҫӗ. Тӑваттӑмӗш урокра рисовани пулмалла. Ачасене Поли́на Ива́новна вӗрентет.



# Ь





конь-ки

| | | |
|---|---|---|
| ку-кăль | су-пăнь | конь-ки |
| мă-кăнь | мă-кăль | вы-льăх |
| хал | сахал | турат |
| халь | ахаль | турать |

## Марье.

Марье шкула çӳрет. Вăл Валерипе пĕр пáртă хушшинче ларать. Вĕренессе лайăх вĕренет.

Марье килте ахаль лармасть. Вăл кĕнеке вулать. Амăшне пулăшать.

*ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь ь*

*мăкăнь, супăнь, коньки.*



## Пысăк савăнăç.

Пирĕн атте ырă кăмăллă, ĕçчен çын. Вăл платник. Халь выльăх витисем тунă çĕрте ĕçлет.

Атте çемьешĕн те тăрăшать. Ĕнер вăл хулара пулчĕ. Санькkапа мана валли пальтосем, конькисем илсе килчĕ.

Атте парнесем илни пирĕншĕн питĕ пысăк савăнăç пулчĕ.

### Кам-ши вăл?

Кам пире ачашшăн
лăпкать пĕчĕкрен,
чипер çын тăвасшăн
çунать чĕререн?
Вăл—пирĕн анне!

ъ ъ ıı ы ы ы

Ырă кăмăллă çын.

# Я я





я-лав

| | | | |
|---|---|---|---|
| ял | я-лав | хă-яр | у-яв |
| ят | Я-кур | мă-ян | ту-я |
| ян | па-ян | пă-яв | яш-ка |
| я-ка | я-лан | у-яр | яс-мăк |

## Якур.

Манăн шăллăм Якур ятлă. Вăл пилĕк ҫулта.

Эпĕ Якура яланах кĕнекесем, картинкăсем кăтартатăп.

Пирĕн Якур лайăх ача. Вăл йăваш тата тирпейлĕ.

я я я я я ll я я я ялав

Асла уяв ҫывхарать.



## Пирĕн ял.

Пирĕн ял Çавал хĕрринче. Ялăн урамĕсем вăрăм. Яла кĕнĕ çĕртех шкул ларать. Ялта читальнă пур. Унта пирĕн Толя пичче ĕçлет.

## Çĕнĕ шкул.

Ял вĕçĕнче, тӳремре,
капăр, çĕнĕ шкул ларать.
Кашни ир халь вăл пире
вĕренмешкĕн йыхăрать.

| | | |
|---|---|---|
| **ял** | па-**ян** | **ят** |
| Ва́-**ля** | Са́-**ня** | а-**тя** |

*Я Я Я l l l я я я я я я я*

*Якур лайăх ача.*

# Зз



Ли-за | Зо-я | зво-нок | Зи-на | ре-зин-кă



ро-зă

## Звонок хыççăн.

Переменӑ пĕтрĕ. Ли́за звонок парать. Вĕренекен ачасем урока васкаççĕ. Ачасем пурте класра. Урок пуçланчĕ.

Пирĕнпе пĕрле Зина, Сима, Лиза тата Зоя вĕренеççĕ. Вĕсем пурте лайăх вĕренеççĕ.

**за са | зу су | со зо | зя ся**

*розă, звонок, резинкă*



## Вылямалли кимӗ.

Зиновипе Ко́стя туслӑ. Пӗрре Костьӑпа Зинови вылямалли кимӗ тунӑ. Кимӗ ҫине пӗчӗк хӗрлӗ ялав ҫакнӑ. Вӗсем киммине шывлӑ лупашкана янӑ. Кӑштах ҫил пулнӑ. Кимӗ шыв тӑрӑх шуса пынӑ. Хӗрлӗ ялавӗ вӗлкӗшнӗ. Ачасем хӗпӗртенӗ.

## Колхоз пӗвинче.



Пирӗн колхо́з пӗвинче
хур-кӑвакал савӑнать,
чӑма-чӑма ир ҫинче
шыва кӗрет, ҫӑвӑнать.

З З З З З З З З З З

Зина, Зоя, Зинови.

# Юю



| | | | |
|---|---|---|---|
| юр | ю-рӑ | хӑ-ю | юн-кун |
| юл | ю-па | ю-хӑм | юл-таш |
| ют | ю-ман | ю-мах | Ю-рий |

## Юман.

Юман вӑрманта ӳсет. Вӑл çирӗп йывӑç. Юмантан тӗрлӗ япаласем тӑваççӗ. Юманӑн хуппи те юрӑхлӑ. Вӑл сӑрӑ тунӑ çӗре каять.

| | | |
|---|---|---|
| **юн**-кун | **юл**-таш | **ют** |
| А-**нюк** | И-**люш** | Пе-**тюк** |

ю ю ю ю ю

юрӑ, юмах, юнкун.



## Анюкпа Илюш.

Анюкпа Илюш пĕр çемьери ачасем. Анюк — асли. Илюш — кĕçĕнни. Анюк виççĕмĕш класра вĕренет. Илюш кăçал çеç шкула кайрĕ.

## Юр çăвать.



Юр çăвать, юр çăвать,
хура çĕре шуратать.
Тухăр, ачасем,
пурте урама!
Тухăр хăвăртрах
юр купалама.

Юман çирĕп йывăç.

# Жж



журнал | жней-кă

## Же́ня.

Же́ня аппа почтальон пулса ĕçлет. Вăл колхозниксене çырусем, хаçат-журналсем леçсе парать.

Хăйĕн ĕçне Же́ня аван тăвать. Уншăн ăна колхозниксем мухтаççĕ.

Же́ня аппа кĕнеке вулама юрататъ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| **жа** | **шу** | **же** | **ши** |
| **ша** | **жу** | **ше** | **жи** |

*э э э и и и с с с ж*

*журнал, жнейкă ж*



## Жу́чкă.

Пирĕн йытă пур. Вăл Жу́чкă ятлă. Жу́чкă пирĕн кил-çурта сыхлать. Пирĕн пата ют çын пырсан, вăл вĕрет.

Жу́чкă манпа выляма юратать.

## Журнал.




Класа учитель журнал илсе пырать.

Журналта вĕренекен ачасен ячĕсене çырнă.

Журналта ачасем мĕнле вĕреннине кăтартнă.

Журналта хăш ача шкула мĕнле çӳрени те паллă.

*Ж Ж Ж Ж Ж Ж*

*Женя. Журнал.*

# Бб



| | | |
|---|---|---|
| Бо́-ря | ра-бочи | авто-бус |
| би-лет | бул-кӑ | бук-варь |

## Кино курни.

Рабочисен канмалли кун пулнӑ. Рабочисем хӑйсен тӑванӗсемпе клуба пухӑннӑ. Вӗсем унта кино курнӑ. Кино Октябрь уявӗ ҫинчен пулнӑ. Рабочисене кино кӑмӑла кайнӑ.

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| **ба** | **пу** | **бы** | **пи** | **бо** | **пе** | **бя** |
| **па** | **бу** | **пы** | **би** | **по** | **бе** | **пя** |

*б б б б б б б б б б б б б*

*билет, клуб, рабочи*



## Библиоте́кă.

Пирĕн ялта библиоте́кă пур. Библиотекăра кĕнекесем, журналсем нумай.

Борис пичче нумай кĕнеке вулать. Вăл библиотекăна кĕнеке илме çӳрет.

### Автобус.



Тӳрĕ, тикĕс çулпала
пĕр авто́бус вĕçтерет.
Хăйне ирĕк çул пама
вăл таçтанах систерет:
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту-у!
Таптанатăн вĕт, ас ту!

Л Л э э Б Б Б
Боря. Библиотекă.




| | | |
|---|---|---|
| ра́-дио | о́р-ден | ме-да́ль |
| ди-ва́н | за-да́-чă | Да-ни́л |

**Ра́дио.**



о́р-ден

Шкулта ра́дио. Клубра та ра́дио. Пирĕн килте те ра́дио пур.

Эпир час-часах ра́дио итлетпĕр. Ра́дио çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет, юрăсем юрласа кăтартать.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| **та** | **дя** | **ту** | **ды** | **де** |
| **да** | **тя** | **ду** | **ты** | **те** |





## Дежу́рнăйсем.

Класра кулленех дежурнăйсем пулаççĕ. Вĕсем класа ытти ачасенчен иртерех çитеççĕ. Дежурнăйсем класри йĕркене асăрхаççĕ. Вĕсемех класри сывлăша уçăлтараççĕ. Клас доскине таса тытаççĕ.

## Йывăр зада́чă.



Лида задачă шутланă. Анчах задачă тухман.

— Пар, хам шутласа парам,—тенĕ пиччĕшĕ.

— Çук, çук, эпĕ хамах шутласа кăларатăп, — тенĕ Лида. Вăл задачăна питĕ тăрăшса шутланă. Задачă тухнă.

Д Д Д Д Д Д Д Д Д

Дежурнăй. Даниил.

# Гг





гру-зо-ви́к

| | |
|---|---|
| ва-го́н | бри-га́-дă |
| ге-рой | гру-зо-ви́к |
| ла-герь | га-раж |
| у-тюг | Га-га-рин |

## Урок вĕренни.

Ге́нăпа Га́ля пĕр çемьери ачасем. Вĕсем иккĕшĕ те шкула çӳреççĕ. Ге́на виççĕмĕш класра вĕренет. Га́ля кăçал çеç вĕренме пуçланă. Гальăпа Ге́на урок хатĕрленĕ. Ге́на задачă шутланă. Га́ля сăвă вĕреннĕ. Ге́нăпа Га́ля ĕçленине вĕсен ашшĕ тĕрĕсленĕ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| **га** | **ку** | **го** | **ки** | **ге** |
| **ка** | **гу** | **ко** | **ги** | **ке** |

*г г г г г г г г г г г*

*грузовик, бригадă.*



## Пионе́р ла́герӗ.

Пионер ла́герӗ шыв ҫывӑхӗнчи илемлӗ вырӑнта. Вӑрман хӗррине чатӑрсем карнӑ. Ҫӳлерехре столовӑйпа кӳхньӑ тата склад пур.

Ла́герь варринче пысӑк лаптӑк. Унта хӗрлӗ ялав вӗлкӗшет.

Ла́герьти пурнӑҫ питӗ савӑнӑҫлӑ. Ачасем ла́герьте канаҫҫӗ, сывлӑха тӗреклетеҫҫӗ. Вӗсем ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленеҫҫӗ.

Г Г Г Г Г Г Г Г

Гена пуллӑ тытнӑ.

# Цц



цир-куль

| | | |
|---|---|---|
| цех | милици | цир-куль |
| акаци | станци | страни-цӑ |
| цирк | сценӑ | кон-церт |



## Канаш станцийӗ.

Пӗрре эпир Канаша кайрӑмӑр. Канаш — чугун ҫулӑн пысӑк станцийӗ. Вӑл станци урлӑ яланах поездсем иртеҫҫӗ.

Эпир тавар турттаракан поезд куртӑмӑр. Вӑл поезд Хусантан Улатӑра кайрӗ.

Пассажирски поезда та кӗтсе илтӗмӗр. Вӑл Шупашкартан Мускава каякан поезд пулчӗ.



# Фф




фа́б-ри-кӑ

| | | |
|---|---|---|
| Фома́ | торф | те-ле-фо́н |
| Фе́ня | шарф | фу-фа́й-кӑ |
| Фе́дя | гра-фи́н | фо́р-точ-кӑ |
| фе́р-мӑ | фут-бо́л | па-те-фо́н |

## Фе́дя ашшĕ.

Фе́дя ашшĕ çĕвĕ фабрикинче ĕçлет. Ку фабрикăра пальтосем, фуфайкăсем çĕлеççĕ.

Фе́дя ашшĕ лайăх ĕçлет. Ĕç нормине вăл яланах ирттерсе тултарать. Федя ашшĕне лайăх ĕçленĕшĕн о́рден панă.





## Фéня аппа.

Пирĕн колхоз пысăк. Колхозăн фермăсем пур: ĕне ферми, сысна ферми тата ыттисем те.

Феня аппа сысна ферминче ĕçлет. Ку фермăра ăратлă сыснасем çитĕнтереççĕ. Фермăри сыснасем шултра, шап-шурă. Вĕсене Феня аппа лайăх пăхать.

Феня аппана хисеп грамотипе наградăланă.

| | | |
|---|---|---|
| **ва-фа** | **фе-ве** | **фо-во** |
| **ву-фу** | **ви-фи** | **вы-фы** |

*о о Ј Ј э э ф ф ф ф ф*

*Феня фермăра ĕçлет.*

# Ёё



| | | |
|---|---|---|
| ёл-кă | **лёт-чик** | шах-тёр |
| шо-фёр | мон-тёр | са-мо-лёт |
| Лё-ня | Фёк-ла | вер-то-лёт |



мон-тёр

## Ё л к ă.

Çĕнĕ çул çывхарать. Пирĕн шкулта ёлкă пулать. Ёлкă тума чăрăш илсе килчĕç. Ăна пысăк пÿлĕме вырнаçтарчĕç. Эпир ёлкă валли кайăксем, самолётсем турăмăр. Юрăсем юрлама, сăвăсем калама вĕрентĕмĕр. Пирĕн ёлкă капăр пулать. Пире валли кучченеçсем хатĕрлеççĕ.

*ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё ё*

*Шкулта ёлкă пулать.*



## Сывлăха сыхласси.

Пирĕн шкулта тухтăр пулчĕ. Вăл ачасен сывлăхне тĕрĕслерĕ. Розăпа Серёжăн куçĕсем начар курнă. Çавăнпа вĕсене пĕрремĕш партă хушшине лартрĕç.

Тухтăр пире сывлăха сыхласси çинчен ăнлантарчĕ. Алă çăвасси, шăл тасатасси, чĕрнесене касасси çинчен каларĕ. Çи-пуçа тусантан тасатма хушрĕ. Эрнере пĕрре мунчара çăвăнмалла, терĕ.

Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё Ё

Ёлкă çинче теттесем.

# Щ щ



плащ | ещӗк | щӗткӑ

## Ращара.

Раща варринче уҫланкӑ пур. Унта колхоз утар тунӑ. Утарта ретӗн-ретӗн вӗллесем лараҫҫӗ.

Ҫулла раща илемлӗ. Уҫланкӑра темӗн чухлӗ чечек. Пыл хурчӗсем каллӗ-маллӗ вӗҫеҫҫӗ. Вӗсем чечек сӗткенне пухаҫҫӗ. Чечек сӗткенӗнчен пыл пулать.

Ҫулла ращара сывлӑш уҫӑ.

щ щ щ щ щ щ

ещӗк, плащ, раща.



**Хăвна ху**
**таса тыт,**
**сывлăхлă пулăн!**

**Щёткăсем.**



Ку щёткăпа эпĕ шăл тасататăп.

Ку атă-пушмак тасатма кирлĕ.

Ку щёткипе тумтир тасататпăр.

Виçĕ щётки те мана кирлĕ!

**ча | ща | чу | щи**

*Щ Щ Щ*

*Щёткă кирлĕ япала.*

# Ъ



разъ-езд

| | | |
|---|---|---|
| кĕсъе | разъезд | Атăлъял |
| съезд | объявлени | Мăнъял |

## Разъéзд.

Пирĕн ялтан инçех мар чугун çул иртет. Унта разъéзд пур. Разъездá пĕр-пĕрне хирĕç пыракан поездсене ирттерсе яма тунă.

Разъездрá çуртсем пур. Вĕсенчен иккĕшĕнче разъездра ĕçлекенсем пурăнаççĕ. Ку çуртсем ыттисенчен пысăкрах, шап-шурă мăрьеллĕ.

Разъездра Мăнъял çыннисем те ĕçлеççĕ.

ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ ъ

Разъездра çуртсем.

### Эпир вĕренетпĕр.

Эпир, çамрăк ачасем,
куллен шкула çӳретпĕр.
Тĕрĕс çырма, вулама,
шутлама та пĕлетпĕр.

### Тупмалли юмах.

Ани шурă, вăрлăхĕ хура. (К....е).



### Нинăпа асламăшĕ.

Ни́на шкултан киле таврăннă. Килĕнче унăн асламăшĕ çеç пулнă. Ни́на сĕтел хушшине ларнă. Вăл асламăшне кĕнеке вуласа панă. Унтан сăвă каланă. Асламăшĕ савăнса итленĕ. Вăл Нинăна мухтанă.

*Н Н Н Н Н Н Н*

*Нина кĕнеке вуланă.*

## Бóря.

Боря пĕрремĕш класра вĕренет. Вăл шкула вăхăтра çӳрет. Унта вăл питĕ тăрăшса вĕренет.

Шкултан таврăннă хыççăн Боря урок хатĕрлет. Унтан ашшĕ-амăшне пулăшать. Пушă вăхăтра кĕнеке вулать. Хăш чухне вăл юлташĕсемпе урамра вылять.

Боря ĕçчен те тирпейлĕ ача. Вăл хăйĕн юлташĕсемпе туслă пурăнать.

## Ваттисен сăмахĕ.

Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.



**Каласа пар:** эсĕ вăхăта мĕнле ирттеретĕн?



## Пирĕн клас.

Пирĕн клас пысăк та çутă. Унта партăсем тата клас доски пур. Партăсем умĕнче учитель валли сĕтелпе пукан лараççĕ. Клас кĕтессинче шкап тата этажеркă. Стена çинче паллă çынсен сăн ӳкерчĕкĕсем пур. Чӳречесем çинче чечексем ӳсеççĕ.

Пирĕн клас таса.

## Ĕç эрни.

Эрнере çичĕ кун. Эпир ултă кун шкулта вĕренетпĕр. Пĕр кун килте канатпăр.

## Кун ячĕсем.

Тунтикун. Ытларикун. Юнкун. Кĕçнерникун. Эрнекун. Шăматкун. Вырсарникун.



## Пирĕн çемье.

Пирĕн çемьере тăватă çын: атте, анне, Та́ня ятлă йăмăк тата эпĕ. Атте колхоз бригадирĕ. Анне фермăра ĕçлет. Эпĕ шкулта пĕрремĕш çул вĕренетĕп. Та́ня пилĕк çулта. Вăл ача садне çӳрет.

## Туссем.



Тантăшпа эпир ялан
пурăнатпăр пит аван.
Пурăнатпăр пĕр ялта,
пĕр ялта—пĕр колхозра.
Вĕренетпĕр пĕр шкулта,
пĕр шкулта та пĕр класра.



**Ӑваш халӑх сӑвӑҫи.**

Константин Васи́льевич Ивано́в — чӑваш халӑхӗн паллӑ сӑвӑҫи. Константин Иванов лайӑх сӑвӑсем, юмахсем ҫырнӑ. Вӑл тата „Нарспи“ ятлӑ кӗнеке ҫырнӑ. Унта чӑваш халӑхӗн ӗлӗкхи пурнӑҫне кӑтартса панӑ.



**Шыв юхать.**

Шӑнкӑртатса шыв юхать
ҫӳллӗ валак пусӗнче.
Кӗмӗл пекех ялтӑрать
шывӗ хӗвел ҫутинче.

*Константин Васильевич Иванов.*



**Ватӑ ҫынна хисеплени.**

Урамра Серёжӑпа На́стя вылянӑ. Вӗсенчен инҫех мар пӗр карчӑк утса пынӑ. Унӑн аллинче карҫинкка пулнӑ.

Ҫул яках пулман. Карчӑк такӑнса ӳкнӗ. Карҫинккари япалисем сапаланса кайнӑ.

Ачасем карчӑк ӳкнине курнӑ. Вӗсем ун патне чупса пынӑ. Ӑна тӑма пулӑшнӑ. Сапаланса выртнӑ япаласене пуҫтарса карҫинккана хунӑ.

Ачасем карчӑка киле ҫитиччен ӑсатса янӑ. Карчӑк вӗсене ӑшшӑн тав тунӑ.

---

Ватӑ ҫынна хисепле—хӑвнах ырӑ пулӗ!



## Пирĕн колхоз.

Пирĕн колхоз пысăк та пуян. Унăн уй-хирĕ сарлака.

Колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем пур. Тĕрлĕ ял хуçалăх машинисем нумай. Грузовиксем пур. Колхоза электричества та кĕртнĕ. Колхоз электричества вăйĕпе усă курать.

Пирĕн колхоз кукуруза нумай лартса тăвать. Кукуруза выльăх-чĕрлĕх тухăçне ӳстерме пулăшать.

Колхозăн клуб пур. Унта час-часах кино кăтартаççĕ. Кино курма шкул ачисем те çӳреççĕ.

Колхозра ваттисем те, çамрăккисем те— пурте тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхозниксен пурнăçĕ çултан çулах лайăхланса пырать.

### Ваттисен сăмахĕ.

***Колхоз пурлăхĕ—халăх пурлăхĕ. Ăна хаклас пулать, тăшмантан сыхлас пулать.***



## Иван Владимирович Мичурин.

Мичурин — пирĕн çĕршыври ăста пахчаçă пулнă. Вăл тем тĕрлĕ лайăх çимĕç йывăççисем ӳстерме вĕрентнĕ.

Пирĕн çĕршывра Мичурин ĕçĕ çултан çулах сарăлса пырать. Колхоз сачĕсенче паха улмасемпе çырласем туса илеççĕ.

Ку ĕçе шкул ачисем те вĕренсе пыраççĕ.

### Мичурин пек.

Эпир шкулăн пахчинче
савăнса ĕçлетпĕр!
Мичурин пек ĕçлеме
куллен вĕренетпĕр!

*Иван Владимирович Мичурин.*



## Эпĕ Шупашкара кайни.

Пирĕн аттен пĕрре Шупашкара каймалла пулчĕ. Хăйпе пĕрле атте мана та илсе кайрĕ.

Эпир автобус çине лартăмăр. Вĕçтерсе пырать автобус малалла. Часах Шупашкар курăна пуçларĕ. Эпир акă Шупашкарти Хĕрлĕ площаде çитсе тăтăмăр.

Эпир автобус çинчен антăмăр та Хресчен çуртне вырнаçрăмăр. Часах атте Советсен çуртне кайрĕ.





Ик-виç сехетрен атте таврăнчĕ. Эпир хула курса çӳрерĕмĕр. Пысăк-çке Шупашкар! Урамсем сарлака та вăрăм. Мĕн чухлĕ илемлĕ, пысăк çуртсем! Халăх, вĕççĕр халăх урамсенче!

Эпир Пионерсен çуртĕнче пултăмăр. Музее те кĕрсе куртăмăр. Мĕн-мĕн çук вара унта!

Тата эпир Атăл хĕрринче пултăмăр. Аслă Атăл! Пысăк та илемлĕ юхан шыв. Ун тăрăх шап-шурă пăрахутсем çӳреççĕ.





## Хӗл ҫитрӗ.

Ҫанталӑк сивӗтрӗ. Часах юр ҫурӗ. Таврана шап-шурӑ турӗ. Шывсем шӑнса ларчӗҫ.

Колхозра ҫур акине хатӗрленме пуҫларӗҫ.. Ял хуҫалӑх машинисене юсама тытӑнчӗҫ. Вӑрлӑх тасатаҫҫӗ. Уй-хире тислӗк турттараҫҫӗ.

Ачасем ҫунашкасемпе йӗлтӗрсене юсарӗҫ. Вӗсем савӑнса тӑвайккинче ярӑнаҫҫӗ.

**Тупмалли юмах.**

***Шурӑ ҫитти пӗтӗм хире витсе хучӗ.***

(.р)



**Пушӑ вӑхӑтра.**

Васкӑр, ачасем,
пурте урама!
Илӗр
йӗлтӗрсем,
айтӑр ярӑнма!



## Мускав.

Пирĕн пичче Мускавра вĕренет. Çулла вăл яла килчĕ. Пичче пире Мускав çинчен каласа пачĕ.

Мускав питĕ пысăк, илемлĕ хула. Унта нумай халăх пурăнать. Çурчĕсем илемлĕ, çӳллĕ. Урамсенче трамвайсем, автомобильсем, автобуссем çӳреççĕ. Çӳлте самолётсем вĕçеççĕ. Çĕр айĕнче метро пур. Мускав—Совет Союзĕн столици.

Эпир пурте пичче каласа панине хаваслăн итлесе лартăмăр.



*Метро.*



*Трамвай.*



## Владимир Ильич Ленин.

Ленин ӗҫ халӑхӗн ҫулпуҫӗ, аслӑ вӗрентекенӗ, ҫывӑх тусӗ пулнӑ. Вӑл ӗҫ ҫыннисен пурнӑҫне ҫӑмӑллатма тӑрӑшнӑ. Рабочисемпе хресченсен ачисем пурте вӗренччӗр, тенӗ. Пирӗн ҫӗршывӑн ӗҫ халӑхӗ Ленин вӗрентнине асра тытать. Ленин кӑтартса хӑварнисене туса пырать.

* * *

Аслӑ Ленин ҫутипе
телей ҫулне тупрӑмӑр.
Ӗҫре тимлӗ пулнипе
пуян пурнӑҫ турӑмӑр.

*Владимир Ильич Ленин.*



## Совет Ҫарӗ—пирӗн вӑй.

Совет халӑхӗ мирлӗ пурнӑҫшӑн тӑрӑшать. Совет халӑхӗн лӑпкӑ пурнӑҫне усал тӑшмансем пӑсасшӑн.

Совет халӑхӗн лӑпкӑ пурнӑҫне Совет Ҫарӗ сыхласа тӑрать.

### Совет Ҫарне.

Ҫӗнӗ юрӑсем юрлатпӑр
эпир уҫӑ сасӑпа.
Совет Ҫарне ыр сунатпӑр
пурте ӑшӑ кӑмӑлпа!

*Совет Ҫарӗ сывӑ пултӑр!*



## Колхозниксемпе рабочисем.

Колхозниксем ялта, рабочисем хулара пурӑнаҫҫӗ.

Колхозниксем тыр-пул тӑваҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗх усраҫҫӗ, пахча ҫимӗҫ ӳстереҫҫӗ. Рабочисем тӗрлӗ машинӑсем, нумай хутлӑ ҫуртсем тӑваҫҫӗ. Вӗсемех атӑ-пушмак, кӗпе-тумтир ҫӗлеҫҫӗ.

Колхозниксемпе рабочисем пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем пӗр-пӗрне яланах пулӑшаҫҫӗ.

Колхозниксемпе рабочисем килӗштерсе пурӑнни—пирӗн Ҫӗршывӑн тӗрекӗ.

*Ҫурлапа мӑлатук - пирӗн герб.*




## Эпир миршӗн!

Пире вӑрҫӑ кирлӗ мар.
Миршӗн пурте кар тӑрар!



## Пирӗн ӗмӗт.

Пирӗн ӗмӗт пит пысӑк:
Космос паттӑрӗсем пек
Эпир пурте пуласшӑн,
Космос тӑрӑх вӗҫесшӗн!

## Савӑнӑҫлӑ ёлкӑ.

Пирӗн ёлкӑ питӗ капӑр.
Симӗс, симӗс йӗпписем.
Ҫӗн ҫул касҫӗ савӑнатпӑр
эпир, ҫамрӑк ачасем!

Ёлкӑ ҫинче, ав, ҫунаҫҫӗ
тӗрлӗ тӗслӗ ҫутӑсем.
Ярӑм-ярӑм усӑнаҫҫӗ
парнесемпе теттесем.

Килӗр, килӗр, ачасем,
алла-аллӑн тытӑнар,
янӑратар юрӑсем,
тӗрлӗ ташӑсем ташлар!





А
Ӑ
Б
В
Ӗ
Ж
З
И
Н
О
П
Р
Ӳ
Ф
Х
Ц
Ъ
Ы
Ь


Г Д Е Ё
Й К Л М
С Т У
Ч Ш Щ
Э Ю Я

Цена 20к.



# Ӳ ӳ

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| ӳс | ӳп-ре | тӳ-ме | ӳп-ке | сӳс |
| уҫ | ӳп-ле | ҫӳ-хе | хӳ-ме | ҫӳҫ |
| ӳт | сӳ-ре | хӳ-ре | ӳт-пӳ | шӳт |
| пӳ | ҫӳ-ҫе | тӳ-пе | ҫӳ-хӳ | ҫӳп |

## **Ӳпле.**

Вӑрман уҫланки тӳремре. Уҫланкӑра ӳпле пур. Ӑна ҫӳҫерен тунӑ. Ӳпле сарлака. Ҫумӑр ҫунӑ. Ачасем ӳплере ларнӑ.







Сăмах тумалли сыпăксем.

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| на | ну | ла | ма | ул | ал | лă |
| ар | ра | ман | шар | рам | лар | ха |
| ых | ыр | шă | мăш | рăх | хăр | ша |
| ву | вă | нă | вăр | рăм | хал | выр |
| ва | вы | су | са | хан | сă | ми |
| ус | ли | ça | уç | çу | çын | çă |
| па | еп | ле | лĕ | пă | çе | пан |
| не | пи | хи | пе | се | ил | нал |
| ту | эп | тă | эр | йăм | ре | май |
| ка | тӳ | чă | пĕ | ме | чĕ | рăш |
| пӳ | ки | юл | со | ор | но | пăн |
| за | ёл | герь | бо | чи | фер | ща |

ăмах тумалли сыпăксем.

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| а | ул | ал | лă | ан | лан | нан |
| р | рам | лар | ха | ху | хă | лăн |
| ш | рăх | хăр | ша | ран | лăх | мăл |
| р | рăм | хал | выр | нав | рас | мах |
| | хан | сă | ми | ши | си | ван |
| | çу | çын | çă | пу | лам | шăр |
| | пă | çе | пан | пар | рăç | лап |
| | се | ил | нал | леш | рем | çум |
| | йăм | ре | май | пин | сеп | рăх |
| | ме | чĕ | рăш | рес | сăк | чĕк |
| | ор | но | пăнь | вет | ля | таш |
| | чи | фер | ща | щёт | вод | ден |

Касса кăлармалли саспаллисем.

| | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| А | А | а | а | а | У | у | у | у | Н | Н |
| Л | л | л | М | м | м | м | Ă | ă | ă | Р |
| Х | х | х | Ы | ы | ы | Ш | ш | ш | В | в |
| с | с | И | и | и | Ç | ç | ç | П | п | п |
| ч | Е | е | е | Т | т | т | Э | э | Й | й |
| к | ӳ | ӳ | Ё | ё | ё | О | о | о | ь | ь |
| я | З | з | з | Ю | ю | Ж | ж | ж | Б | б |
| д | д | Г | г | г | Ц | ц | ц | Ф | ф | Ё |
| щ | ъ | ъ | . | , | - | — | ! | ? | : | ; |